**Ăратлă выльăхпа ĕçлесси – «АПК-на аталантарасси» наци проекчĕн тĕп пайĕ**

# Ăнăçу çулĕпех аталанаççĕ малтисем



**Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчен ăратлă выльăхсен выставкине хутшăннă ĕçченсем (сулахайран сылтăмалла): Галина Владимировна Васильева тĕп зоотехник, Зоя Константиновна Ефимова пăру пăхакан, Фаина Николаевна Максимова техник-осеменатор. Хуçалăх курава виçĕ тынашка, пĕрремĕш пăруламалли тына, 7 сысна ами тăратрĕ.**



**«Свобода» ăратлă выльăх ĕрчетекен заводри сысна амисем çулленех пысăк тухăçпа савăнтараççĕ.**



**Аренăра – «Оринино» хуçалăх.**

Чĕпсене кĕркунне шутлама хушнă ытарлă сăмахсем – ял хуçалăхĕн кирек хăш отраслĕнче ĕçлекенсемшĕн те пурнăç тĕрĕслĕхĕ. Халăх хуçалăхĕнче паян ыранхине пăхса тунă кашни утăм ылтăн пĕрчипех танлашать темелле. Çакна пурте пĕлетпĕр, анчах ăнăçусем вăй илччĕр тесе çĕнĕлĕхсене тата çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртме тытăнса тăратпăр. Кайран вара хамăр наянлăхăмăра пытарма тăрăшса «çӳлтисене» ятланçи тăватпăр: çак хаклава пăхсан, хаксем ӳснишĕн, вĕсем пире майлă марришĕн, ĕç условийĕсем хамăра тивĕçтерменнишĕн пирĕн пĕр айăп та çук. Çав вăхăтрах кӳршĕри хуçалăх аталану çулĕпе пырать, çĕнĕ техникăпа, ытларах продукциллĕ выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлет. Ăçтаха аталанупа юхăнчăк чикки? Çак ыйту çине тулли хурав пачĕ те ĕнтĕ сенябрĕн 26-мĕшĕнче «Чувашское» пĕрлешӳре ăратлă выльăхсен республикăри куравĕ.

– «АПК-на аталантарасси» наци проекчĕ ял хуçалăхне ырă улшăнусен варкăшне илсе çитерчĕ. Ыранхи куна пăхса ĕçлекен валли паян пур условисем те пур, патшалăх пулăшăвĕ те айккинче тăмасть. Анчах нумай шутлатпăр, калаçатпăр, çав хушăрах калаçу сакки çинче ларсах пурнăçран юлни пирки çывăха та илместпĕр. Çĕннине куллен алла илсе пыракансем вара ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăваççĕ. Вĕсен экономика кăтартăвĕсем те малаллах каяççĕ, – терĕ ăратлă выльăхсен выставкине уçнă май Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ С. Димитриев курав тĕллевĕ хуçалăхсем ăратлă выльăх ĕрчетес енĕпе мĕнле ĕçленине ыттисене кăтартасси, республикăри ял хуçалăх организацийĕсене ăратлă çамрăк выльăх ытларах сутасси, ăратлă выльăхпа ĕçленинчен продукци нумайрах илесси, вырăнта паха апатçимĕç хатĕрлессине ӳстересси пулнине палăртнă май. Çак сăмахсем выставкăн пĕтĕм ĕçне сăнларĕç, малтуртăмлă ĕçлекенсен пултарулăхне хакларĕç. Министр çумĕн сăмахĕсенчен çĕнĕ технологисене хальтерех алла илсен пирĕн кашни ĕнерен вăтамран 6 пин килограмм сĕт сума паян пур майсем те çителĕклĕ. Сысна ĕрчетесси тĕнче шайне тухать пулсан, чăх-чĕп отраслĕ пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ ыттисемшĕн тĕслĕх шайĕнче.

Ăратлă выльăх ĕрчетессипе тимлени обществăлла выльăх-чĕрлĕх отраслĕн, пысăк ĕç кăтартăвĕсемпе тĕреклĕ экономика никĕсĕ пулса тăнине Муркашсем те аван ăнланаççĕ. Çак ăнланăва пирĕннисем курава сакăр хуçалăхран (республикăри ытти районсенчен пуринчен те ытларах) выльăхсем тăратса çирĕплетрĕç. Пирĕн выльăхсем çине курава пынисем ăмсанса пăхнине сăнама вара питех те кăмăллă пулчĕ. Сакăр хуçалăх тенĕрен, кашнинех ятран асăнар-ха: «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕ, «Оринино» тата «Герой», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсем, ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свободăпа» Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ăратлăх завочĕсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики тата юхăннă «Чемеево» хуçалăхри сыснасен ăратлăхне сыхласа хăварассишĕн талпăнакан А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ. Сăмах май, асăннă выставкăна пĕлтĕр районтан 5 хуçалăхпа – «Ударник», «Свобода», «Оринино», «Герой», «Чемеево» – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики тата «Моргаушкорм» чикĕллĕ яваплăхлă общество хутшăннăччĕ.

– Ял хуçалăхне аталантарма пăхнă наци проекчĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене çеç мар, килти хушма хуçалăха аталанма та тĕкĕ парать. Унпа усă курассине хамăр тĕллевре куратпăр, – терĕ А. Афанасьевăн шурă та таса сыснисем патĕнчен уйрăлнă май министр çумĕ. Унăн сăмахĕсенче çĕршывăн тĕрлĕ шайри ертӳçисем те паян ялта пурăнакан вăранасса кĕтни сисĕнчĕ. Кăна Александр Аркадьевичăн хуравĕ те çирĕплетрĕ:

– Выльăх-чĕрлĕх тупăшлă мар тенине ĕненес килмест. Ахальтен-им эпĕ килти хушма хуçалăхра сыснасен кĕтĕвне 200 пуçа çитертĕм. Çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илни, перекетлĕхе кулленхи ĕçре мала кăларни алла усма памасть, – терĕ вăл министр çумĕ иртсе пынă май хăй илсе килнĕ сыснасем çине ăшшăн пăхса. Курав малалла ĕçлерĕ. Унта пынисем выставкăна илсе тухнă кашни выльăхпа кайăк-кĕшĕк патĕнче чарăнсах паян хамăр мĕн тума пултарнипе кăсăкланчĕç, кӳршĕсем епле ĕçленине пăхса çĕнĕ тĕллевсем палăртрĕç.

«Чувашское» ăратлăх пĕрлешĕвĕн территорийĕнче тăватăмĕш хут иртнĕ ăратлă выльăхсен выставкинче Чăваш Республикинчи выльăхсен малашлăха шантаракан чи лайăх пайĕ пулчĕ. Тирпейлĕ вырăнта йĕркеленĕ пĕчĕк мар пӳлĕмсенче-картасенче вырăн йышăннă ăратлă ĕнесем, тынашкасем, лашасем, сысна амисемпе çурисем, канлĕ выртакан сысна аçисем, курса çӳрекенсене куçран пăхакан сурăхсемпе качакасем, чăхсемпе автансем, путенесем, хурсемпе кăвакалсем, фазансем (сунара çӳремеллисем, Румыни ăратлисем, кĕмĕл тата ылтăн тĕслисем), цесаркăсем, кăрккасемпе турткăшсем (павлинсем), бассейнра ишекен тĕрлĕ тĕслĕ пулăсем... Кашнин патĕнчех ăратăна ăнлантарса тата выльăхран мĕнле тата мĕн чухлĕ продукци туса илме май пуррине ăнлантарса çырнă пĕчĕк стендсем, выльăхсемпе ĕçлекенсем. Выльăх-чĕрлĕхе аталантарас ĕçре малашлăха ăратлă выльăхсемпе ĕçлессинче куракансем валли пурте пур: кур, вĕрен, килĕшӳ ту та ĕçле.

Выставкăпа пыратăп. Умра –«Свобода» хуçалăхăн пысăк шурă сысна ăрачĕн вырăнта кăларнă «Свободовский» элита класлă ама: 267 кг таять, 169 см тăршшĕ. Ăна 7 хутчен çăвăрлаттарнă, кашнинчех вăтамран 14-шар çура. Инçех мар Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхран илсе килнĕ пысăк шурă сысна ăрачĕн «Тамппи» аçи. Элита рекорд класлă выльăх 305 кг таять, 185 см тăршшĕ. Хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ И. Воронов кăмăллă унпа. Хăйсем пăхакан выльăхсемпе пĕрле выставкăна килсе çитнĕ Г. Неволинапа Е. Скворцова та хăйсен ĕçĕпе кăмăллă. Галина Александровна хăйĕн ушкăнĕнче 300 пуç сысна самăртать, унăн ушкăнĕнчи кашни выльăх талăксерен вăтамран 380 грамм ӳт хушать. Елена Валентиновна вара сысна амисем патĕнче 20-мĕш çул ĕçленипе ĕç вăрттăнлăхĕсене пĕтĕмпе майлах алла илнĕ. Кăçал та вăл юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр ама пуçне 10,5 çура илме мехел çитернĕ.

«Герой» хуçалăхран килнĕ «Цигайская» ăратлă сурăхсем хăйсене пăхнине кура çуллен 100 сурăх пуçне 102-103 путек, 4,6 кг çăм параççĕ.

Инçех те мар «Ударник» хуçалăхăн хура-шурă ĕни. Илемлĕ кĕлеткеллĕ ĕне пысăк тухăçпа савăнтарасси пирки иккĕленӳ те çук. Ял хуçалăх министрĕн çумĕ сăвăма 6 пин килограма çитерме тĕллев пуррине Йӳçкассисем пурнăçланă та иккен. Апла пулсан паян çакăн пек ĕнесене аталантармалла.

Çак вăхăтра 13-15 уйăхри тынасене аренăра уттарса хак панине пĕтĕмлетрĕç: кĕмĕл медале «Ударник» хуçалăхăн тыни тивĕçрĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, Муркашсем выставкăна хутшăнса нихăшĕ те Муркаш ен ятне ямарĕç, хăйсем РФ Президенчĕ палăртнă «АПК-на аталантарасси» наци проектне пурнăçлас ĕçре тивĕçлĕ вырăн йышăннине выставкăна тăратнă выльăхсемпе çирĕплетрĕç.

Выставка пĕтĕмлетĕвĕ те çĕр-шывра «АПК-на аталантарасси» наци проекчĕ ĕçленĕ чух Муркашсен малтуртăмлă пурăнма, ăратлă выльăхпа тухăçлă ĕçлесе экономикăра çĕнĕ ӳсĕмсем тума вырăнтах май пуррине кăтартрĕ. Çак выставкăра Муркашсен ăратлă выльăхĕсем нумай хисепе тивĕçрĕç: Суворов яч. хис. хуçалăхри сыснасен шурă пысăк ăратăри çамрăк амасен ушкăнĕ 3-мĕш степеньлĕ аттестата, «Ударник» хуçалăхри 10-12 уйăхри тына 3-мĕш степеньлĕ, 13-15 уйăхри тына 2-мĕш стапеньлĕ, пĕрремĕш пăруламалли тына 3-мĕш степеньлĕ, пĕрремĕш пăруланă ĕне 3-мĕш степеньлĕ аттестатсене, «Герой» хуçалăхри «Цыгайская» ăратлă сурăхсем 2-мĕш степеньлĕ тата çак хуçалăхри асăннă ăратăри така 2-мĕш степеньлĕ, Шурчасенех выставкăна пынă шурă пысăк ăратăри сысна амисен ушкăнĕ 3-мĕш степеньлĕ аттестатсене, «Свобода» хуçалăхри шурă пысăк ăрата никĕсĕ çинче кăларнă «Свободовский» тĕслĕ сысна аçи тата ку хуçалăхри çак ăратăн асăннă тĕсĕнчи сысна ами çурисем 1-мĕш степеньлĕ, кунтанах пынă çамрăк сысна аçисен ушкăнĕ 1-мĕш степеньлĕ аттестатсене, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинчен илсе пынă çămарта тумалли «Хайсекс белый» ăратăри чăхсем 1-мĕш степеньлĕ аттестата, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри пысăк шурă сысна ăрачĕн аçи 2-мĕш степеньлĕ, çамрăк аçасен ушкăнĕ 3-мĕш степеньлĕ аттестатсене, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнчен килнĕ 13-15 уйăхри тына 3-мĕш степеньлĕ, 16-18 уйăхри тына 2-мĕш степеньлĕ аттестатсене тивĕçрĕç. Курава тухнă А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕн сыснисем вара Тав çырăвĕллĕ пулчĕç, малашлăх валли ырă урок илчĕç.

Куратпăр, ăратлăхпа ĕçлемелли никĕс хамăр районтах пур. Анчах хальлĕхе çакăнпа çителĕклĕ усă курни сисĕнместха. Мĕншĕн тесен выльăхсен йышĕ палăрмаллах чакса кайрĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**«Ударник» хуçалăхран выставкăна пынă Е. Александрова выльăхсене куракансем умне илсе тухассипе палăрчĕ. «Хамăр ĕçĕмĕре кăтартма пĕлни – аталану çулĕ. Пĕлтĕрхи выставкăра 5 пуç выльăхран 2 аттестат илнĕччĕ пулсан, кăçал 6 пуç çине 4 аттестата тивĕçрĕмĕр», – терĕ вăл черетлĕ медаль илнĕ май.**



**Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ăратлă выльăх заводĕнчен выставкăна илсе тухнă сысна аçипе хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ И. Воронов кăмăллă.**



**«Герой» хуçалăхран килнĕ «Цигайская» ăратлă сурăхсем хăйсене пăхнине кура çуллен 100 сурăх пуçне 102-103 путек, 4,6 кг çăм параççĕ.**



**Фазансем (сунара çӳремеллисем, Румыни ăратлисем, кĕмĕл тата ылтăн тĕслисем) курава пынă кашни çыннах тĕлĕнтерчĕç.**